2008 çул – Çемье çулталăкĕ

# Кашниех хăй ĕçĕнче маттур





«Çын ĕçпе илемлĕ»,– тет ваттисен сăмахĕ. Унăн тĕрĕслĕхне районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене тухсан яланах куратăн. Куратăн та йывăрлăхсене пăхмасăр малалла талпăнакан çĕр ĕçченне тăрăшулăхĕшĕн хисеплетĕн. Ĕç укçи пĕчĕккине пăхмасăрах çĕрне-кунне пăхмасăр, сивви-ăшшине уямасăр, ĕç условийĕсене тиркемесĕр вăл куллен ĕçе тухать, тăван хуçалăха хăватлантарассишĕн, «АПКна аталантарасси» наци проектне пурнăçлассишĕн вăй хурать. Халĕ каланин пĕр тĕслĕхĕ вăл – Турай тăрăхĕнчи Яхеевсем. Çемье пуçĕ – Викентий Михеевич **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре)** унччченхи çулсенче «Динамо» хуçалăх мехпаркĕнче токарьте вăй хунăскер, виççĕмĕш çул ĕнтĕ ку тăрăхра йĕркеленнĕ «Агроурожай» акционерлă обществăра сыснасене типĕлле тăрантарма кирлĕ комбикорм хатĕрлекен оператор пулса ĕçлет. Пилĕк тĕрлĕ апат хатĕрлет унăн арманĕ. Кашнинех вăхăтра тата технологипе кирлĕ чухлĕ.

– Ку технологипе сыснасен ӳт хушаслăх ӳсни ĕçлес кăмăла хăпартать, çĕннине шантарса хавхалансарах ĕçлеме хистет, – терĕ ĕçрен самантлăха пушаннă оператор.

Шăкăл-шăкăл çемьере арăмĕпе упăшки пĕр çăвартан пурăнаççĕ тени те Яхеевсем тĕлĕшпе каланăнах туйăнать. Викентий Михеевичăн мăшăрĕ Алевтина Григорьевна **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)**, 12 çул тăван хуçалăхра тĕрлĕ ĕçсенче вăй хунăскер, юлашки 5 çулта Турайри ветеринари участокĕнче санитаркăра тимлет. Кунти кашни ĕç халăх сывлăхĕпе çыхăннине ăнланса, Алевтина Григорьевна хăй ĕçĕнче ответлăха çирĕп туять. Çавăнпах ăна коллективра та, кунта килекен ял çыннисем те хисеплеççĕ. Раççей Президенчĕ 2008 çула Çемье çулталăкĕ тенĕрен кунта та Яхеевсем ял çыннисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ. Виçĕ хĕр ӳстернĕ вĕсем. Аслипе кĕçĕнни педагогика университетĕнчен вĕренсе тухса алла аслă пĕлӳ илнĕ пулсан, вăталăххи – бухгалтер. Ашшĕ-амăшĕн ыра кăмăллăхĕпе тăрăшулăхне малалла тăсаççĕ вĕсем.

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Профилактика операцийĕ

# Юр çийĕн çӳреме

Чăваш Республикин хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти тĕрлĕ тĕслĕ машинăсене тĕрĕслесе тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ В. Димитриев январĕн 23-мĕшĕнче юр çийĕн çӳрекен техникăна тĕрĕслеме, вĕсене регистраци тунине пăхса вĕсемпе усă курма ирĕк илнине пĕлме республикăра январĕн 28-мĕшĕнчен февралĕн 15-мĕшĕччен «Снегоход» профилактика операцийĕ ирттерме хушу кăларнă. Районти патшалăх техника надзорĕн инспекцийĕ çак вăхăтра тăтăш рейдсем ирттерĕ. Çавна май ĕç коллективĕсенче пулса асăннă операцин тĕллевĕсемпе паллаштарĕ, кивелнĕ мотохатĕрсене тупса палăртса регистрацирен кăларассипе ĕçсем пурнăçлĕ.

Иртнĕ çул республикăра çак операци вăхăтĕнче тĕрĕсленĕ техникăн 43,8 процентне çирĕплетнĕ йĕркепе регистрацилеменни, 33,3 проценчĕ техосмотр тăманни, 21 процентĕнче водительсем кирлĕ категориллĕ удостоверенисемсĕр пулни, 43,8 проценчĕ регистрациленĕ документсемсĕр эксплуатациленни, 40,3 проценчĕ патшалăх регистраци номерĕсемсĕр çӳрени палăрнă. Кăçал çак çитменлĕхсене пĕтересси операцин тĕп тĕллевĕ пулать те.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**патшалăх техника надзорĕн районти пуçлăхĕ.**

Ял Совечĕсем йĕркеленĕренпе – 80 çул

# Ялти влаç органĕсем çапла аталаннă

Раççейре ял Совечĕсем 1918 çулхи январьте йĕркеленме пуçланă. Вĕсем Советсен влаçĕн чи аялти органĕсем шутланнă. Унăн членĕсене ял çыннисем суйланă. Малтанхи ял Совечĕсен полномочийĕсем виçĕ уйăх пулнă. Вăхăчĕ сахаллине пăхмасăрах вĕсем ĕçленĕ, ял çыннисене çĕнĕ пурнăçа хăнăхтарнă.

1924 çулхи октябрĕн 16-мĕшĕнче ВЦИК ял Совечĕсем çинчен положени йышăннă, вĕсен ĕçлес тапхăрне çулталăка çитернĕ. Çĕнĕ положенипе ял Совечĕсем пулăшу органĕсем шучĕпе тĕрлĕ комиссисемпе секцисем йĕркелеме пултарнă. Ку тапхăрта ял Совечĕсен сечĕ çирĕпленсех çитеймен пулнă, вĕсен йышĕ час-часах улшăннă. Çакă аталанăва чăрмав пулнăран 1927 çулхи административлă реформа вăхăтĕнче ял Совечĕсене пысăклатас ĕç пулса иртнĕ.

Хальхи Оринин ял тăрăхĕ вырăнĕнче 1927 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса Кĕçĕн Оринин ял Совечĕ, 1928 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен Оринин ял Совечĕ ĕçлеме пуçланă. Унăн йышне Оринин, Лапкас, Çĕньял Оринин, Чамăш, кайран 1930 çултан Лантăш ялĕсем кĕнĕ. Оринин ял Совечĕпе пĕрлех вăл çулсенче пирĕн енре Пăсăрман (Пăсăрман, Пиккикасси, Патаккасси, Вăрманкас ялĕсем кĕнĕ), Мулкачкасси (Мулкачкасси, Канькасси ялĕсем), Атапай (Атапай, Çеменкасси) ял Совечĕсем пулнă. Атапай ял Совечĕ 1967 çулхи январĕн 5-мĕшĕнчен Оринин ял Советне кĕнĕ.

Административлă пайлав реформисене ирттериччен Кĕçĕн Оринин ял Совечĕ Чикме уесĕн (1920 çултан Шупашкар уесĕн) Шурча вулăсне кĕнĕ.

ВЦИК Президиумĕн 1927 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕнче кун çути курнă постановленийĕпе уессемпе вулăссене пĕтерсе çĕнĕ территори единици – район – кĕртнĕ. Çакăн хыççăн ыттисемпе пĕрлех Патаккасси районне туса хунă. Унта Оринин ял Совечĕ кĕнĕ.

1928 çулта ял Совечĕсене пысăклатас ĕç иртсен Пăсăрман, Вăрманкас, Мулкачкасси, Патаккасси, Пиккикасси ялĕсем Оринин ял Советне кĕнĕ. Администраци центрĕ Оринин салинче вырнаçнă.

Чăваш АССРĕн ВЦИК Президиумĕ 1928 çулхи декабрĕн 6-мĕшĕнчи Постановленийĕпе республикăри пур ял Совечĕсене те ялсенчи ĕç тăвакан комитетсене йĕркелеме хушать. Çав кунран пуçласа Оринин тăрăхĕнче Чăваш АССРĕн Патаккасси районĕн Орининти рабочисемпе хресченсен тата хĕрлĕ армеецсен депутачĕсен ĕç тăвакан комитечĕ ĕçлеме пуçлать.

Чăваш Республикин экономика статистикин справочникĕн кăтартăвĕсемпе 1935 çулта Оринин ял Советне кĕнĕ кашни ялта колхоз пулнă: Орининпа Лапкасра – «Красное Сормово» (1930 çулта йĕркеленнĕ), Мулкачкассинче – «Восток» (1930), Канькассинче – «Урал» (1930), Çĕньял Орининта – «Глиссар» (1930), Чамăшра – «Красная Звезда» (1931), Вăрманкассинче – Молотов ячĕллĕ (1931), Патаккассинче – «Трудовик» (1931), Пиккикассипе Пăсăрманта – «Аврора» (1930), Лантăшра – «Ландыши» (1930).

1935-1936 çулсенче ял Совечĕн территорийĕнче 3 шкул пулнă, вĕсенче 339 ача вĕреннĕ.

1939 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче Сĕнтĕр районĕ йĕркеленсен Патаккасси районĕ ун йышне кĕрет.

1944 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнче Муркаш районĕ йĕркеленсен мартăн 30-мĕшĕнче Оринин ял Совечĕ çĕнĕ района кĕрет. 1959 çулхи июнĕн 14-мĕшĕнче Муркаш районне пĕтерсен, 1962 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа 1964 çулхи мартăн 11-мĕшĕччен (Муркаш районне таврăниччен) Оринин ял Совечĕ Шупашкар районне кĕнĕ.

Колхозсене пысăклатас ĕç пуçлансан 1967 çулхи январĕн 6-мĕшĕнче Çатракасси ял Советне кĕнĕ Атапай, Сентимĕр, Çеменкасси ялĕсем Оринин ял Советне куçаççĕ.

Ял Совечĕсен председателĕсем пулса тĕрлĕ çулсенче А. Е. Лепешкин, И. Н. Николаев, Е. Воробьев, Е. М. Мочалова, Н. М. Максимова, Н. Я. Васильев, М. А. Просов, С. А. Суриков вăй хунă.

Çулсем иртеççĕ, пурнăç улшăнать, унччченхи ял Совечĕсем те юлашки çулсенче ял администрацийĕсем, ял тăрăхĕсем пулса улшăнчĕç. Анчах ял çыннисем вырăнти влаç органне унччченхи пекех ял Совечĕ тесе калаççĕ.

**Н. ВАСИЛЬЕВ,**
**вăрçăпа ĕç ветеранĕ.**

Ял хуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмлетнĕ май

# Отчетлă пухусенче малашлăха палăртмалла

***Кăрлач уйăхĕн юлашки кунĕсене çитрĕмĕр. Кун вăрăмланма пуçлани те куç кĕрет. Апла пулсан çĕр ĕçĕпе пурăнакан район çыннин çитес çур аки пирки те шутламалла. Унччен вара иртнĕ ял хуçалăх çулне пĕтĕмлетсе отчетлă пухусем ирттересси кун йĕркинче тăрать. Мĕнле ыйтусем тĕп вырăн йышăнĕç кăçалхи пухусенче? Çак ыйту çине хурав шыраса эпĕ район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçин çумĕпе А. И. ПАВЛОВПА тĕл пултăм.***

**– Александр Ильич, нарăс уйăхне çывхарнă май хуçалăхсенчи отчетлă пухусен ыйтăвĕ малти вырăна тухать. Мĕн тĕп вырăн йышăнĕ унта кăçал?**

– Отчетлă пуху тетпĕр те çĕр ĕçченĕ унта иртнĕ çулхи ĕçсене тĕплĕ тишкерсе хакласса кĕтетпĕр. Мал туртăмлă утăмсемпе çитменлĕхсене тĕрĕс палăртни хуçалăхсен аталанăвĕн çулне уçать тесен никам та хирĕçлемĕ. Иртнĕ ял хуçалăх çулĕ çăмăл пулмарĕ. Çут çанталăк условийĕсем ытти çулхисенчен уйрăлсарах тăни çĕр ĕçченне уй-хир ĕçĕсене агротехника ыйтнă тапхăрта ирттерсен кăна тухăç çулĕ çумра пулассине тепĕр хут ĕнентерчĕ. Уй-хир ĕçĕн пахалăхĕпе выльăх-чĕрлĕх отраслĕ тӳрременĕх çыхăннă: пĕри мал туртăмлă-тăк тепри те ӳсĕмлĕ аталанать. Çаксене шута илсе хуçалăхсен ĕçченĕсем кăçалхи пухусенче тĕрĕс пĕтĕмлетӳсем туса 2008 çул валли пурнăçланма пултаракан мал туртăмлă производствăпа финанс планĕсем йышăнасса, çывхарса пыракан çур аки валли уй-хир ĕçĕсене ăнăçлă ирттерме кредитсем илессине татса парасса шанатăп. Çак утăмсем ыранхи ĕçсен никĕсĕ пулса тăраççĕ те.

**– Пухусем хăçан пуçланĕç тата вĕсенче хуçалăхсен специалисчĕсен ĕçĕсене пăхса тухасси пулĕ-и?**

– Ку йĕрке пирĕн хуçалăхсенче вун-вун çул каяллах çирĕпленнĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕсенче хуçалăх ĕçченĕсем умĕнче вырăнти агроном та, зоотехникпа инженер та, хăрушсăрлăх техникипе ĕçлекен те хăйсен ĕçĕсем пирки каласа парĕç, умри тĕллевĕсене палăртĕç. Вĕсен ĕçне тĕрĕс хак парасси – хуçалăх ĕçченĕсен тĕллевĕ. Тĕрĕс пĕтĕмлетӳ кăна ыранхи куна шанчăклă пăхтарать. Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи отчетлă пухусем, тĕпрен илсен, нарăс уйăхĕнче тата пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче иртмелле. Çывхаракан çур аки пирки шутлакансем кунта та ĕçе тăсса ямасса шанатăп.

**– Пухусем пирки уçăмлăх кĕртнĕшĕн тавтапуç. Вĕсем мал туртăмлă плансемпе иртессе кĕтетпĕр.**

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Спорт хыпарĕсем

# Лапсарти ăмăртура

Иртнĕ çул вĕçĕнче (декабрĕн 21-24-мĕшĕсенче) Лапсар поселокĕнче бокс вăййин республикăри турнирĕ иртрĕ. Тĕрлĕ регионсенчи 78 спортсмен хутшăнчĕ унта. Кашниех ответлăха туйса хатĕрленнĕ ăмăртăва. Çавăнпах кĕрешӳсем те çивĕч иртрĕç. Чулхуласем те, Тутарстан боксерĕсем те, Марий Эл спортсменĕсемпе Чăваш Республикин тĕрлĕ районĕсемпе хулисенчен килнĕ бокс енĕпе пуçламăш утăмсем тăвакан çамрăксем те ринга ячĕшĕн тухмарĕç. Çăмăл пулмарĕ кĕрешӳ. Анчах пирĕн районтан унта кайнă 8 спортсмен титуллăрах боксерсем умĕнче те пуç усмарĕç. Вĕсенчен пĕри – Иван Налимов – 1999 çулта çуралнă яшсен ушкăнĕнче ринга пĕрремĕш хут тухрĕ. Тухрĕ те 24 килограмм виçеллĕ категорире 1-мĕш вырăн йышăнчĕ. 40 кг виçеллĕ категорире финал Муркашсен пулчĕ: пĕрремĕш çул мар ăмăртакан Алексей Илларионов та (1994 çулта çуралнисем хушшинче) çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ, Егор Ярухин 2-мĕш вырăна тухрĕ.

1990 çулта çуралнă юниорсем хушшинче те ăмăрту çивĕч иртрĕ. 64 кг виçеллĕ категорире пирĕн Михаил Николаев Шупашкарти «Динамо» клуб боксерĕпе финала тухрĕ, кĕрешĕве вăхăт çитмесĕрех çĕнтерӳпе вĕçлерĕ.

Пирĕн çамрăксем çулталăка çĕнтерӳпе вĕçлени ыра шанчăк çуратрĕ.

**С. ЧЕРКАШИН, тренер.**

# Çамрăк боксерсен ӳсĕмĕ

Район центрĕнче С. Черкашин ертсе пыракан боксерсен клубне çӳрекенсем 2008 çула та ӳсĕмлĕ пуçларĕç. Кунта уйрăмах çамрăксене палăртмалла. Акă январĕн 9 – 12-мĕшĕсенче Çĕрпӳре çамрăк боксерсен республикри турнирĕ иртнĕ. Унта хутшăннă 156 спортсмен хушшинче Муркашсем те пулнă. Хăйсен шкулне тивĕçлĕ шайра кăтартнă вĕсем. Акă 1999 çулта çуралнă Иван Налимов 22 килограмлă виçе категорийĕнче пуринчен те хĕрӳллĕрех пулнă, 1-мĕш вырăн йышăннă. Унăн юлташĕсем 1995 çулта çуралнă Стас Кожевников 32 кг виçеллĕ категорире 2-мĕш, 1994 çулта çуралнă Алеша Илларионов 40 кг виçеллĕ категорире 3-мĕш пулнă.

Мĕнех, аслăрах çулсенчи маçтăрсем вырăнне тивĕçлĕ смена ӳсни пурсăмăра та савăнтарать.

**А. ПЕТРОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**



**Пысăк шанчăк кӳрекен çамрăк боксерсем черетлĕ тренировкăра.**

50 çул пирус туртнă пулсан

## Ĕмĕр вăрăмрах-и е пирус çулĕ?

Раççейре пирус туртнипе кĕрешессине пĕлтерчĕç те шухăша кайрăм, çĕршыв общество сывлăхĕшĕн тăрăшнине курса савăнтăм. 70 çула çывхаратăп, анчах çак хушăра 7 пирус та туртса курмарăм. Çак сиенлĕ йăлана пăрахайманнисем е пăрахма тăрăшманнисем пирки сахал мар шухăшларăм. Акă мĕнле пĕтĕмлетӳ патне пырса тухрăм эпĕ. Пирус пурнăçра мĕнле йĕр хăварнине пăхсан, пирус туртаканăн та, унпа çывăх çынсен те кунта шутламалли пайтах.

## Пирус тăршшĕ

Пĕр пирус тăршшĕ 5 сантиметр. Ăна кунне 30 штук туртсан тата пĕр пачка пирус 8 тенкĕ те 50 пус тăрать тесе шутласан ума çакăн пек ӳкерчĕк тухать. Çӳлерех кăтартнă йĕркепе тата хăвăртлăхпа туртсан, ăна пăхăнакан çын талăкра 30 пирус туртать. Унăн тăршшĕ – 150 сантиметр. Ку йĕркепе пăхсан çулталăкри пирус тăршшĕ 54750 сантиметр пулать. Çак сиенлĕ йăлана пăрахайман çын 25 çулта 1368750 сантиметр пирус туртса ун тĕтĕмне хăйĕн ӳпки витĕр кăларать. 50 çулта çак сиенĕн вăрăмăшĕ 2737500 сантиметра çитет. Ăнланмалларах каласан – 27,375 километр, пĕрре Москакассине кайса килмелĕх.

## Енчĕк пушаннине пăхсан

Пĕр пачка пируса 8 тенкĕ те 50 пус тесе шутласан, 30 пирус вăл пĕр пачка çурă пулать. Апла пулсан пĕр куна каякан хак – 12 тенкĕ те 75 пус. Çулталăкра ку сумма 4653 тенкĕ те 75 пуса çитет. Пытармăпăр, пĕр хитре костюм хакĕ. 25 çулта çухату виçи 116 пин те 343 тенкĕ те 75 пуспа танлашать. 50 çулта – 232 пин те 687 тенкĕ те 50 пус. Кĕскен каласан, пĕр пĕчĕк хваттер е çурт, пĕчĕк автомашина. Ăçта вăл? Хуравĕ пĕрре: кĕл пулса çилпе вĕçнĕ. Раççей саккунĕ кун чухлĕ пурлăха вут тивертсен ай-ай айăплать. Пирус туртакан çын та пĕр-пĕр кун çакăн чухлĕ пурлăх çухатсан лăпкă юлаймастех, хăйне сăтăр кӳрекене шырама пуçлать. Ăна тытсан тем туса пăрахма хатĕр вăл, анчах пирĕн тĕслĕхре темшĕн-çке вăл çак пурлăх çине алă сулать. Мĕншĕн? Кам хурав парĕ мана? Тата обществăна çакăн чухлĕ сăтăр кӳрекене кам ответ тыттарĕ?

Эпĕ паян 67 çулта. Хама çирĕп туятăп. Пирус туртман та, туртмастăп та. Вулаканăм, кала-ха, тĕрĕс çул суйласа илмен-и-ха эпĕ? 17 çулта пирус туртма пуçланă пулсан, паянччен пĕр пӳрт çунтарса ярăттăм, хама преступник вырăнне хурăттăм. Çапла шутламастăн-и эсĕ, паян пирус туртакан?

**Егор ВАСИЛЬЕВ.**

Якаткасси ялĕ.